Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

12 (7546) № * Юн кун, 2008 ҫулхи февралĕн (нарăс) 13-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Район кунне уявланинчен

## Уяв иртрĕ, умра – ҫĕнĕ тĕллевсем



Иртнĕ шăмат кун К. Иванов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх академи драма театрне халăх ирех йышлăн пуҫтарăнма пуҫларĕ. Театрăн 3-мĕш хутĕнче районти ал ĕҫ ăстисен, шкул ачисен пултарулăхĕн куравĕ пурне те илĕртрĕ. Кунтах районти предприятисемпе организацисен, ял тăрăхĕсен ĕҫĕ-хĕлĕпе паллаштаракан стендсене вырнаҫтарнă. Районти ĕҫ коллективĕсен тата Муркашри ентешлĕхĕн представителĕсен тĕл пулăвне халăх йышлăн килнĕ. Район йĕркеленнĕ куна халалланă ҫак уявра районăн иртнĕ ҫулхи социаллă-экономика аталанăвне пĕтĕмлетрĕҫ. Район пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов хăйĕн докладĕнче кашни отрасльте тунă утăмсемпе, кăҫал пурнăҫа кĕртмелли задачăсемпе тĕплĕн паллаштарчĕ. Уяв пуҫламăшĕнче кăтартнă район ĕҫĕ-хĕлĕпе паллаштаракан видеофильмпа доклад вăхăтĕнче кăтартнă слайдсенчен те район пурнăҫĕ яр уҫҫăнах курăнчĕ.

Муркашсене тунă ӳсĕмсемпе саламлама, малашне ăнăҫусем сунма хăнасем те йышлăн килнĕ. Чăваш Республикин Юстици министрĕ В.П. Петров Муркашсем республикăра чысла-сумлă район пулнине палăртрĕ. Пĕтĕм Раҫҫейри куҫ курманнисен обществин пирĕн районти пуҫламăш организацийĕн ертӳҫине А.Д. Михайловăна «Чăваш Республикин халăха социаллă пулăшу парассин тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ» хисеплĕ ят панипе саламларĕ. Ҫавăн пекех ĕҫре пултаруллă ытти маттур ĕҫченсене тĕрлĕ министерствăсен грамотисем парса чыс турĕ.

Муркашсене уяв ячĕпе ҫавăн пекех Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин ертӳҫи В.К. Тихонов, РФ ПФ Чăваш Республикинчи управленийĕн – Патшалăх управлени ертӳҫи Р.А. Кондратьева, «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш регионĕнчи уйрăмĕн ĕҫтăвком председателĕ Г.Г. Николаева, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов, Етĕрне район пуҫлăхĕ Е.М. Яранский, кӳршĕллĕ Мари Эл республикинчи Горномарийски районĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ Е.В. Смелов, Шупашкар хулинчи Калинински район пуҫлăхĕ А.Е. Леонтьев, Муркашсен Шупашкарти ентешлĕхĕн пуҫлăхĕ А.И. Федотов тата ыттисем саламларĕҫ.

### МАЛТИСЕНЕ ПĔРЛЕ ЧЫСЛАР

Муркашсене саламламалли сăлтавсем вара чăннипех те сахал мар. Районăн социаллă-экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем те паллă. Йăлана кĕнĕ тăрăх унăн ҫĕнтерӳҫисене шăпах район кунĕнче чысларĕҫ. Ял хуҫалăх предприятийĕсем хушшинчи ăмăртура ҫĕнтернĕ «Ударник» савнапа производство хуҫалăхне 1 степень дипломĕпе тата 12 пин тенкĕ укҫан премии парса саламларĕҫ район пуҫлăхĕпе Ю.А. Ивановпа депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ И.В. Николаев. 2 вырăна тухнă «Муркашри чăх-чĕп фабрики» РГУП тата «Герой» хуҫалăх 2 степень дипломĕсемпе 8-шар пин тенкĕ укҫан премие тивĕҫрĕҫ. Виҫҫĕмĕш вырăна тухнă «Восток» тата Ильич ячĕллĕ хуҫалăхсем 3 степень дипломпа 5-шер пин премие тивĕҫрĕҫ.

Ял хуҫалăх предприятийĕсенчен ҫавăн пекех «Свобода» тата «Оринино» хуҫалăхсем лайăх ĕҫленине палăртмалла.

Уявра промышленность предприятийĕсем хушшинче малти виҫĕ вырăна тухнă «Сеспель», Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсене ҫакнашкал дипломсемпе тата укҫан парнесемпе хавхалантарĕҫ. Муркашри кирпĕч завочĕ лайăх ĕҫленине палăртрĕҫ.

Ял тăрăхĕсенчен вара Муркашсем 2-мĕш (1 вырăна никăш ял тăрăхне те паман), Катькассем 3-мĕш вырăна тухнă.

Йӳҫкассипе Москакасси ял тăрăхĕсем лайăх ĕҫленине палăртрĕҫ.

Уявра АПК ĕҫченĕсен экономика ăмăртăвĕн ҫĕнтерӳҫисене те чысларĕҫ. Ял хуҫалăх предприятийĕсенчен выльăх-чĕрлĕх сферинче «Герой» хуҫалăха ҫитекенни пулмарĕ: 1 стьепень дипломĕпе 10 пин тенке тивĕҫрĕ. Хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенчен вара иртнĕ ҫул «Гавитан» ҫĕнтерчĕ, 1 степень дипломпа 8 пин тенкĕ укҫан премие тивĕҫрĕ. Килти хушма хуҫалăхсенчен чи ăнăҫлă ĕҫлекенни Чуманкасси ял тăрăхĕнчи А.П. Степанов пулчĕ, 1 степень дипломпа 5 пин тенкĕ премие тивĕҫрĕ.

Техникăна управа лартассипе иртнернĕ конкурсра малти виҫĕ вырăна тухнă хуҫалăхсене те чысларĕҫ уявра. Вĕсем: «Герой», «Свобода», «Оринино».

Вăрлăх тасатассипе, унăн сорчĕсене хатĕрлессипе тата ҫĕнетессипе чи правур пулнă хуҫалăхсемпе те паллашма кăмăллă пулчĕ район кунĕнче. Юрий Александровичпа Игорь Васильевич дипломсемпе укҫан премисене «Оринино», «Герой», Суворов яч. хис. хуҫалăхсене пачĕҫ.

Районти предприятисемпе организацисенче ĕҫлекенсем ĕҫре ҫеҫ мар, спортра та маттур. Ĕҫ ҫыннисен спартакиадине пĕтĕмлетни ҫакна кăтартса пачĕ. Иртнĕ ҫул ку тĕлĕшпе чи маттуррисем «Оринино» хуҫалăх ĕҫченĕсем пулчĕҫ. Ильич яч. хис. тата районти шалти ĕҫсен пайĕ 2 тата 3 вырăн хуҫисем пулса тăчĕҫ, уявра дипломсемпе укҫан парнесене тивĕҫрĕҫ.

(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.).

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Участоксенчи суйлав комиссийĕсем ĕҫе тытăнчĕҫ

Февралĕн 11-мĕшĕнче территори суйлав комиссийĕ участоксенчи суйлав комиссийĕсен председателĕсемпе тата секретарĕсемпе канашлу ирттернĕ. Сăмах Раҫҫей Федерацийĕн Президенчĕн суйлавне хатĕрленсе ирттерес пирки сăмах пынă. Суйлавҫăсен списокĕсем енĕпе конкретлăрах ĕҫлемелли пирки ăнлантарса панă. Кунпа пĕрлех суйлавпа ҫыхăннă ытти ыйтусене те уҫăмлатнă.

## Февралĕн 17-мĕшĕнче – Ҫамрăк суйлавҫăсен кунĕ

Февралĕн 17-мĕшĕнче районта Ҫамрăк суйлавҫăсен кунне ирттерме палăртнă. Унччен вара февралĕн 15-мĕшĕнче ĕҫлекен ҫамрăксем депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсемпе, территори суйлав комиссийĕн членĕсемпе тĕл пулаҫҫĕ, депутатсен районти Пухăвĕ ҫумĕнчи ҫамрăксен парламенчĕн ларăвĕ иртет.

Февралĕн 16-мĕшĕнче вĕренекенсемпе территори суйлав комиссийĕсен членĕсен, участоксенчи суйлав комиссийĕсен, ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсен тĕл пулăвне йĕркелеме пăхнă. Ҫамрăксем валли вара каҫхине «Ҫамрăксем пуласлăха суйласа илеҫҫĕ» ятпа дискотекăсем иртĕҫ.

Районти библиотекăсенче «Эпир тата суйлав» кĕнеке выставкисем йĕркеленĕ, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче «Мĕнле саккунсемпе пурăнатпăр-ха эпир» право урокĕсем ирттерессине, «Эпир суйлатпăр...» плакатсен конкурсĕсем тăвассине, «Суйлав вăл –...» викторинăсем, кроссвордсен конкурсĕсене ирттерессине йĕркеленĕ.

## Ферма ĕҫченĕсем канашлăва пухăнаҫҫĕ

Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен черетлĕ канашлăвĕ февралĕн 20-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче иртĕ. Канашлăва ял хуҫалăх предприятийĕсен ертӳҫисемпе тĕп зооветспециалисчĕсем, ферма заведующийĕсем, малта пыракан выльăх-чĕрлĕх пăхакансем, ял хуҫалăх пайĕн тĕп специалисчĕсем, район администрацийĕн представителĕсем хутшăнаҫҫĕ. Канашлу 10 сехетре пуҫланмалла.

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Оринитни вăтам шкулта ачасене вырăс чĕлхине тата литературине вĕрентекен хисеплĕ ĕҫтешĕмĕре тата юратнă вĕрентекене **Елена Петровна ФЕДОТОВАНА** 55 ҫул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Халăха вĕрентес ĕҫре пуян опыт пухнă тусăмăра ҫĕр ҫула ҫитиччен таса та сывă пурăнма, пире татах усăллă уроксем пама сывлăх, телей, ăнăҫу сунатпăр. Хăвăр ҫынна ыр сунни сирĕн патăра та ырăпа ҫаврăнса ҫитессе шанатпăр, ҫапла пуласса кĕтетпĕр.

Ҫуралнă кун ячĕпе сире, хисеплĕ Елена Петровна!

**Саламлаканĕсем: пĕрле ĕҫлекенсем тата шкул ачисем.**

Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă, юратнă **Тамара Павловна ИВАНОВАНА** февралĕн 11-мĕшĕнче 80 ҫул тултарнă ятпа саламлатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Утас ҫулу такăр, пурăнас ĕмĕрӳ вăрăм пултăр. Ан ватăл, ан чирле, пурăн эсĕ 100 ҫулччен.

**Саламлаканĕсем: Никифоровсен, Горшковсен, Епишинсен, Федоровсен ҫемйисем.**



Юратнă мăшăра, аттене, маҫака, кукаҫа, пиччене – Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Григорий Данилович ДАНИЛОВА**, ĕҫпе вăрҫă ветеранне, 83 ҫул тултарнă ятпа, **Михаил Данилович ДАНИЛОВА** 70 ҫулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ҫирĕп сывлăх, вăрăм кун-ҫул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Юрий Михайлович МАКСИМОВА** 50 ҫулхи юбилейпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Пурнăҫра вăрăм кун-ҫул тата ҫирĕп сывлăх сунатпăр.

Аннӳ пилленĕ телейне<br>
Ан ҫухатах эс ĕмĕрне,<br>
Аҫу пилленĕ вăй-халне<br>
Ан сапала енчен енне.<br>
Хастар, маттур, патвар эс пул,<br>
Ҫемьешĕн эс – тĕрек пул!

**Саламлаканĕсем: Владимир Александровсен, Валерий Александровсен ҫемйисем тата Муркашра пурăнакан Захаровсен ҫемйисем.**

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕнче

## Ĕҫ пенсийĕсен страхланă пайĕсем ӳсрĕҫ

Февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕҫ пенсийĕсен страхланă пайĕсем 12 процент ӳсрĕҫ. Индексаци коэффициентне Раҫҫей Правительствин йышăнăвĕпе 2008 ҫулхи январĕн 25-мĕшĕнче ҫирĕплетнĕ.

Ҫапла вара февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса страхланă пайлă ватлăха, инвалидноҫе пула тата ҫемьере тăрантаракана ҫухатнипе паракан ĕҫ пенсийĕсен виҫи ӳсрĕ.

Пенсисен база пайĕ пенсионерсен пур категорийĕсен те пĕр пек пулсан, пенсисен страхланă пайĕ мĕн чухлĕ пуласси кашни ҫыннăн расна. Вăл чи малтанах ĕҫ стажĕнчен, ĕҫ укҫи виҫинчен тата Пенси фондне страхователь тӳлесе тăнă страховани взносĕсенчен килет. Ҫавăнпа та пенсин страхланă пайне 12 процент ӳстернĕ май ӳсĕм шайĕ кашни пенсионерăн тĕрлĕрен пулать.

Чăваш Республикипе илес пулсан, ĕҫ пенсийĕсем февраль уйăхĕнчен тытăнса вăтамран уйăхне 178 тенкĕ ӳсрĕҫ. Ҫапла вара ватлăх енĕпе паракан пенсисен виҫи вăтамран 200 тенкĕ ӳсет, инвалидность енĕпе паракан пенсисен виҫи – 113 тенкĕ, ҫемьене тăрантаракана ҫухатнипе паракан пенсисен виҫи – 134 тенкĕ. Вăрҫăра суран тӳснисен ĕҫ пенсийĕсен вăтам шайĕ 232 тенкĕ чухлĕ хăпарчĕ, Аслă Отечественнăй вăрҫă участникĕсен – 256 тенкĕ.

Пирĕн районпа илес пулсан, ватлăх енĕпе паракан пенсисем уйăхне вăтамран 155 тенкĕ, инвалидность енĕпе паракан пенсисем 90 тенкĕ, ҫемьене тăрантаракана ҫухатнипе паракан пенсисем 109 тенкĕ ӳсрĕҫ. Вăрҫăра суранланнă инвалидсен ĕҫ пенсийĕ вăтамран уйăхне 184 тенкĕ, Аслă Отечественнăй вăрҫă участникĕсен 221 тенкĕ ӳсрĕ.

Ҫавна та каласа хăвармалла. Февраль уйăхĕнчи ҫак индексацие пула Чăваш Республики тăрăх пенсисем тӳлеме каякан тăкаксем 59 миллион тенкĕ чухлĕ хăпараҫҫĕ.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳҫин ҫумĕ.**

Суйлав ыйтăвĕсемпе

## *Д. Медведевшăн 75 процент сасăлама пултараҫҫĕ*

Обществăлла шухăша тĕпчекен Пĕтĕм Раҫҫейри центр ку е вăл суйлав епле иртме пултарасси пирки тĕпчевсем ирттерет. Унăн ертӳҫи Валерий Федоров февралĕн 11-мĕшĕнче РИА Новости пресс-конференцийĕнче пĕлтернĕ тăрăх, РФ Президенчĕн суйлавĕнче мартăн 2-мĕшĕнче РФ Президенчĕн кандидачĕ, пĕрремĕш вице-премьер Дмитрий Медведев суйлавҫăсен сассисене 75 процент таран пухма пултарать.

ЛДПР лидерĕ Владимир Жириновский тата КПРФ ертӳҫи Геннадий Зюганов, ыйтнисем панă хуравсем тăрăх,11 тата 12 процент сасă пухĕҫ.

Малтанхи прогнозсем тăрăх суйлавҫăсен 70 проценчĕ суйлава пымалла.

Ыйтусем ҫине Раҫҫейĕн тĕрлĕ регионĕсенче пурăнакан 1,6 пин респондент хуравланă.

## Ҫырăнтару – 2008

**«Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата июнь уйăхĕнчен илсе тăма февральте малтанхи хакпа ҫырăнтараҫҫĕ.**

**Ултă уйăха ҫырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Район хаҫатне хакланиччен ҫырăнса илĕр!**

**РАЙХАҪАТ РЕДАКЦИЙĔ.**